*Шупашкарти 47- мĕш шкул ачисен хаçачĕ*

# *ШĂНКĂРАВ*

*4 №2021, чӳк уйăхĕ*

## *Ку кăларăмра:*


1. **Çĕнĕ çул саламĕ.**
2. **Яков Ухсай çуралнăранпа 110 çул.**
3. **Чӳк уйăхĕн 26-мĕшĕ-чăваш тĕрри кунĕ.**
4. **Сывă пурнăç йĕрки.**
5. **Телефон ачана вĕренме чăрмантарать-и?**
6. **Шкул пурнăçĕнчен. Хыпарсем.**





Çĕнĕ 2022-мĕш çул çитиччен шутлă кунсем юлчĕç, апла пулсан уява хатĕрленме вăхăт çитрĕ! Çитменнине тата пирĕн çĕршывра Çĕнĕ çул чи юратнă уявсенчен пĕри шутланать. Çĕнĕ çул касĕ - чăнах та юмахсемпе савăнăç вăхăчĕ, тĕлĕнмелле асамлă уяв. Пĕчĕк ачасем Хĕл Мучирен парнесем кĕтеççĕ, пысăккисем те çитес Çĕнĕ çулта чи вăрттăн ĕмĕчĕсем пурнăçланасса шанаççĕ.

*Редактортан*

# Р.И. Кириллова, шкул директорĕ.
# Пирĕн пĕрлĕхре-вăй

*Ĕнерхи кун хыҫа юлать…*
*Нумай ҫĕнни халь ҫĕнтерет,*
*Ĕлкĕрекен малта пырать.*
*Пĕлӳ шайне те ӳстерет.*
*Тигр ҫулне мал ĕмĕтпе*
*Утар хастарлăх ҫулĕпе.*
*Лăпкă, тăнăҫ пурнăҫ кашнине,*
*Пурнăҫа кĕртесчĕ плансене.*



2021 ҫул пирĕн шкулшăн та, паллах, ансатах пулмарĕ. Пире вăл тепĕр чух питĕ ырă та кăмăллă, хăш чухне пачах та кăмăллă мар кĕтменлĕхсемпе пулăмсем парнелерĕ. Ҫапах та эпир пуҫăмăрсене усмарăмăр, Шанчăкпа тĕллеве сухатмарăмăр, пĕр-пĕрне шанса та ĕненсе, чăрмавсене ҫĕнтерсе малаллах ăнтăлтăмăр.

Кайри - мала!.. Ҫапла пулнă, ҫапла пулать те. Шанатпăр, ĕненетпĕр: ҫывхарса та вирхĕнсе килекен 2022 ҫул ҫĕнĕ ҫитĕнӳсемпе ҫĕнтерӳсен ҫулталăкĕ пулĕ. Пирĕн пĕрлĕхре-вăй.

Эпир вĕрентӳ ĕҫĕнче пысăк ӳсĕмсем тăватпăр, ҫавна май хамăр ҫитĕнӳсемпе тивĕҫлипех мăнаҫланма пултаратпăр.

Хаклă ĕҫтешсем, вĕренекенсем тата вĕсен ашшĕ-амăшĕсем! Пурсăра та ҫирĕп сывлăх, ҫĕкленӳллĕ кăмăл-туйăм, чун хавалĕпе иксĕлми вăй-хал, ăнăҫу,ырлăхпа телей сунатăп.

Эсир шанни, ĕмĕтленни пурнăҫлантăр! Сирĕн килĕрсенче яланах ача-пăча кулли янăратăр, унта чун ăшши хуҫалантăр!

Ҫĕнĕ ҫула ҫĕнĕ плансемпе,ҫирĕп утăмпа, хавасла туйăм-кăмăлпа кĕтсе илер. Ҫĕнĕрен те ҫĕнĕ ҫитĕнӳсем сунатăп сире.

*Шкул директорĕ Р.И. Кириллова*

## Шкулăн 2020-2021 ҫулхи паллă ҫитĕнĕвĕсемпе мухтанатпăр

- 2021 ҫул - Шкул вĕренӳ отрасльне аталантарассишĕн «ЧИ ЛАЙĂХ 100 ВĔРЕНӲ ОРГАНИЗАЦИЙĔ» реестрне кĕнĕ.
- 2020 ҫул - «Раҫҫейри чи лайăх 100 шкул-2020»конкурс ҫĕнтерӳҫи
- 2020 ҫул - Пĕтĕм Раҫҫейри «Тăван ҫĕршыв вĕренĕвĕн Мăнаҫлăхĕ» конкурс ҫĕнтерӳҫи
- 2020 ҫул – Пирĕн шкула «Пĕтĕм Раҫҫейри Хисеп Кĕнеки» Федераци реестрне кĕртнĕ.












# Яков Ухсай çуралнăранпа 110 çул



Ухсай Яккăвĕ (Яков Гаврилович Ухсай) 1911 çулхи чӳк уйăхĕн 26-мĕшĕнче Пушкăрт Республикинчи Пелепей районне кĕрекен Слакпуç ялĕнче çуралнă. Мускаври патшалăх университетĕнче вĕреннĕ. Мускавра тухса тăнă «Коммунар» тĕп чăваш хаçатĕнче, Пушкăрт аслăлăх тĕпчев институчĕнче, Патăрьел тата Чĕмпĕр педагогика училищисенче ĕçленĕ. Тăван çĕршывăн аслă вăрçине хутшăннă. Тăван çĕршыв вăрçин 1,2 степеньлĕ тата Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсене тивĕçнĕ. Поэта Ленин, Октябрь Революцийĕн, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав тата «Хисеп Палли» орденсем парса чысланă. Раççей Федерацийĕн А.М.Горький ячĕллĕ тата Чăваш Республикин К.В.Иванов ячĕллĕ патшалăх премийĕсен лауреачĕ. Чăваш Республикин халăх поэчĕ. 1986 çулта çĕре кĕнĕ.

Паллăрах кĕнекисем: «Савăнăç кĕнеки», «Тутимĕр», «Сăвăсемпе поэмăсем», «Ту урлă çул», «Акăшкӳль», «Çĕр», «Хурçă та çуннă чух», «Çырнисен пуххи».

*Юратрăм эп хирсем хире.*  
*Ешерне лап çине ларма.*  
*Юратрăм эп хирсем сире*  
*Хам юррăмпа янах сарма.*  
*Эп, вĕт кĕтӳç – хирсен патши*  
*Калап шăпра ура тапса:*  
*Кăтра юрра, ылттăн хире*  
*Вилсен вилĕп ыталаса.*  
*Вăл, ылттăн хир – мĕн пур тĕнче:*  
*Вăл – ман атте, вăл – ман сăпка,*  
*Вилсен вилеп кăкри çинче.*  
*Пулсан пулать çеç вăл кипке.*  
*Рультан тытса ман тракторпа*  
*Кĕрес килет тăван хире –*  
*Тимĕр лаша хура сăнпа*  
*Кĕтеп паян лапра сире.*  
*Сăртсемпелен, варсемпелен*  
*Ян янрĕ тракторăн юрри:*  
*Ун тимĕр сасĕ, вăл çĕлен,*  
*Халь юррăсенĕн чи ырри.*

*Янратăр юрă ман юртса,*  
*Суха-пусăмкунтан эс кай!*  
*Пуçа ухса, ура тапса*  
*Юрра ярать кĕтӳç Ухсай!*

*Я.Ухсай*

*Кăвак çеçке.*  
*Юлташăм тухрĕ ирхине*  
*Йĕпе окопăн хĕррине.*  
*Сасартăк курчĕ вăл çеçке –*  
*Кăвак çеçке илемлĕ-çке.*  
*Ăна татса вăл конвертне*  
*Ăсатрĕ чун варли патне.*  
*Çеçке йăпатĕ инçетре*  
*Фиалка кусçă пĕр хĕре.*  
*Çеçке тинсен те пӳртӳнче*  
*Çеçке пек туйăнĕ тĕнче.*

*Я.Ухсай*

## «Юратрăм эп, хирсем сире» конкурс иртрĕ

Чăваш поэчĕ, çыравçă, драматург çуралнăранпа 110 çул çитнине халалласа республика шайĕнче «Юратрăм эп, хирсем сире» пултарулăх конкурсĕ иртрĕ. Конкурс тĕллевĕ пултарулла ачасене илемлĕ каласма тата вулама вĕрентес ăсталăха аталантарасси пулнă. Çак конкурса пирĕн шкул ачисем те питĕ хастар хутшăнчĕç. Вĕсем Яков Ухсай сăввисене пăхмасăр вулама вĕренчĕç. Петров Е.5-мĕш класс, Осипова А. 6-мĕш класс тата Капустин Н.7 класс вĕренкенĕсене саламлатпăр тата малалла та хастар пулма сунатпăр.



# Чӳк уйăхĕн 26-мĕшĕ- чăваш тĕрри кунĕ

«Вырăс тĕрри те лайăх, анчах чăваш тĕрри- тĕлĕнтерет!»

*И.Я. Яковлев*

Илемлĕ, илемлĕ чăваш тĕрри…Çакăн пек йĕркесенчен пуçланать чăваш халăх юрри. Чăннипех те тĕрĕ илемлĕ, анчах та ăна тĕрлеме пĕлмелле. Чăваш тĕрринче тăван халăхăн пуян историйĕ упранать. Вăл çав тери илемлĕ-çке! Унăн хитрелĕхĕ нихăçан та çухалмасть. Авалхи çи-пуçра чи капăрри - пир кĕпе. Унăн умне, аркине, çаннисене, хул çийĕсене тĕрĕпе питĕ капăрлатнă. Чăвашсем килте хăйсем тĕртнĕ пиртен хитре тĕрĕсемпе илемлетсе çĕленĕ çи-пуçпа çӳренĕ. Тĕрĕ ăсталăхĕ амăшĕнчен хĕрне, унăн ачисене куçса аталанса пырать.

Мĕнле пуян чăваш тĕрри - унта пин-пин çулсен йĕрри. Çак йĕркесен авторĕ- чăваш халăх поэчĕ Васлей Давыдов-Анатри. «Чăваш тĕрри» сăввинче вăл тăван халахăн иксĕлми пуянлăхне- тĕрĕ ӳнерне мухтаса, мăнаçланса шăрçалать. Чăнласах çапла: тĕрĕре – аннен ачаш юрри, тăван ял-йыш, ака-суха сасси, илемлĕ çутă çăлтăрсем…







## Чăваш тĕрри

*Мĕнле пуян чăваш тĕрри, –*
*Унта пин-пин çулсен йĕрри,*
*Унта хăват илет çĕнни,*
*Çынсем ĕмĕртенпе кĕтни.*
*Мĕнле хитре чăваш тĕрри,*
*Ун курăнмасть вĕçĕ-хĕрри.*
*Унта асамлă çăлкуçсем,*
*Илемлĕ çутă çăлтăрсем.*
*Мĕнле чипер чăваш тĕрри,*
*Унта маттур хĕрсен çĕрри.*
*Унта шур хурăнсен ĕшни,*
*Унта шур акăшсем вĕçни.*
*Мĕн авалтан чăваш тĕрри*
*Хĕвеллĕ, хӳхĕм çав тери.*
*Унта тăван ял-йыш сасси,*
*Хирти ака-суха касси.*
*Мĕнле хитре чăваш тĕрри, –*
*Унта çынсен хĕрӳ чĕри,*
*Яш-кĕрĕмсен паха парни,*
*Çĕршыв анне çунат сарни.*
*Мĕнле пуян чăваш тĕрри, –*
*Унта пин-пин çулсен йĕрри.*

*В. Давыдов-Анатри*

«…Халăх хăйĕн историне пĕлет тата астăвать пулсан, унăн пуласлăхĕ пур.Çавăн пек халăх тĕнчере çĕр çинчен нихăçан та çухалмĕ.»

*Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров*

# Сывлăхран хаклă мул çук

*Сывлăх пултăр сан аван,*
*Ĕçӳсем пыччăр кал-кал.*
*Сывă пурнăça ан ман,*
*Пултăр сан ялан вăй-хал.*

## Сывă кĕлеткере сывлăхлă чун

Сывлăха ачаран упра, сывă кĕлеткере сывлăхлă чун теççĕ халăхра. Тĕрĕс калаççĕ: сывлăхсăр пурăнма йывăр.

Эпĕ хамăн сывлăха упрама тăрăшатăп. Кашни ир зарядка тăватăп. Ĕçе ялан çуран утатăп, ĕçрен çуран таврăнатăп.Çавăн пекех ĕç хыççăн усă сывлăшра усăлса çӳретĕп. Утни мышцăсене çирĕплетет, чĕре ĕçне лайăхлатать.

Шыв процедурисем те сывлăхшăн питĕ аван. Çавăнпа та эрнере виçĕ хут душра сивĕ шыв айĕнче тăратăп.

Лайăх ыйхă вăя тавăрать. Çавăнпа та эпĕ вăхăтра çывăрма тăрăшатăп. Çывăрас умĕн, паллах, çиместĕп. Мĕншĕн тесен тулли хырăм çывăрма кансĕрлет.

Вăйлă та сывлăхлă пулас тесен усăллă апат çимелле. Вăл организма энерги парать, ӳсме тата аталанма пулăшать. Çавăнпа та пирĕн çемье сывлăхшăн усăллă апат çиме тăрăшать.

## Сывлăхлă пулас тесен мĕн тумалла?

- Спортпа туслă пулмалла, Спорт пуриншĕн те усăллă.
- Кашни ир зарядка тумалла. Кун йĕркине пăхăнмалла.
- Пĕр вырăнта сахалрах лармалла.
- Усă сывлăшра нумайрах пулма тăрăшмалла. Хĕвел çинче виçеллĕ пулмалла, хĕвел пайăркисем сывлăша сиенлĕ микробсенчен тасатаççĕ, çынна вăй параççĕ.





- Тĕрĕс апатланмалла. Апата вăхăтра çимелле.
- Гигиенăпа туслă пулмалла. Ӳте таса тытмалла. Алăсене час-часах çумалла.





- Усал йăласемпе туслашмалла мар.
- Сывлăха укçа парса илме çук.
- Сывлăх пултăр, сывлăх пулсан ĕç пулать.
- Сывлăх пулсан пуринчен пуян.

*Рубрикăна чăваш чĕлхи вĕрентекенĕсем И.В. Власовăпа О.В. Головина хатĕрленĕ*

# Телефон ачана вĕренме чăрмантарать-и?



Асăннă ыйту пур шкулсемшĕн те çивĕч паян. «Ача урок вăхăтĕнче телефонпа ларсан кирлĕ чухлĕ вĕренеет-и? Парта айĕнче вăл мĕн те пулсан пăхать, вулать е кампа та пулсан çыру çӳретет», - çак шухăш нумай ашшĕ-амăшĕпе вĕрентекене канăç памасть паянхи вăхăтра. Педагогсемпе ашшĕ-амăшĕсем урок вăхăтĕнче телефонпа усă курни ачасене вĕренӳ процесĕнчен пăрни, учителе урок ирттерме кансĕрлени çинчен калаççĕ. Унсăр пуçне тăхтав вăхăтĕнче гаджета алăран яманни ачасене пĕр-пĕринпе хутшăнма кансĕрлет, сывлăха хавшатать. Юлашки вăхăтра ачасен хушшинче куç чирĕсемпе аптăракан нумайланнă. Вĕренекенсем вăтам тата аслă классене çитнĕ тĕле аякрине начар курма тытăнаççĕ. Тăхтавра вĕренекенсенчен ытларахăшĕ телефон тытса ларать. Пĕрисем вăйă выляççĕ, иккĕмĕшĕсем соцсетьсенче юлташĕсемпе çыру çӳретеççĕ, виççĕмĕшĕсем видео кураççĕ. Ачасем пĕр-пĕринпе калаçмаççĕ, вылямаççĕ, ытлашши хускалмаççĕ. Никам та тăхтав вăхăтĕнче килти ĕçе аса илмест, урока хатĕрленмест. Тетрадьсемпе учебниксене портфельтен урока йыхравлакан шăнкăрав янăрана хыççăн тин кăлараççĕ. Паллах, ачасем урок вăхăтĕнче телефонпа усă курма юраманнине пĕлеççĕ. Çапах вăрттăн та пулсан ăна алла тытаççĕ. Чĕркуççи çинче выртакан телефонран юлташĕсем патне СМС-çыру вĕçтереççĕ е тĕрĕслев ĕçне çырса илеççĕ. Уроксем умĕн ачасене телефонсене пĕр вырăна хумалла тутарас - шкулта хаклă япаласене упрама май çук. Хăш-пĕр ачан гаджечĕ 50 пин тенкĕрен те хаклăрах. Класс ертӳçине парас? Анчах мĕнле педагог кун пек яваплăха хăй çине илĕ? «Интернет ăслишĕн - лайăх, усă курма пĕлменнине сиен кӳрет. «Компьютер ачана пăсать», - тени тĕрĕсех. Мĕншĕн тесен пĕрре пуссах пĕтĕм информаци тухать. Анчах интернетри информаци тĕрĕс-и е йăнăш-и - ăна никам та тĕрĕслемест. Ачасем, шел те, ăна тĕрĕс тесе йышăнаççĕ. Вĕреннĕ çынсем çеç интернетра мĕн лайăххине, мĕн начаррине уйăрма пултараççĕ. Тĕрлĕ сайта, соцсетьсене кĕретпĕр-и - ачасем тӳнсе каймалла çыраççĕ: йăнăш çине йăнăш, чарăну паллисем çук. Интернета пулах ачасем вулама чарăнчĕç. Пĕлӳ шайне ӳстерессишĕн тăрăшмаççĕ. Хăшпĕр урокра ачасене телефон кирлĕ мар тесе шухăшлатăп. Анчах аслă классенче физика, астрономи, информатика предмечĕсене вĕреннĕ чухне телефон кирлех», - хăйĕн шухăшне палăртрĕ шкулăн директор çумĕ Н.Н.Тимофеева.

Шкул педиатрĕ И.Г. Агапова каланă тăрăх, 2 çулти ачасен аллинче те паян - кĕсье телефонĕ. Учительсемпе ашшĕ-амăшĕн шухăшне пĕтĕмлетсе калас тăк, интернет чылай çăмăллăх кӳрет пулсан та ачасен хăйсен вăхăтне смартфонсемпе, планшетсемпе аппаланса пĕтермелле мар. Соцсетьсемпе, компьютер вăййисемпе уйрăлми туслашсан ӳсекен ăрăвăн ашшĕ-амăшĕпе калаçма, килти ĕçсене тума, юлташсемпе вылямa тата спорт валли вăхăт сахал юлать. Манăн шухăшпа, вĕренекенсене мобильлĕ телефонпа усă курма чарни тĕрĕсех мар. Шкулăн тĕп тĕллевĕсенчен пĕри - ачасене цифра обществинче пурăнма хатĕрлесси.

А.В. Гаврилова, географи вĕрентекенĕ: Вĕренекенсем шкула 1-мĕш класранах телефон илсе килеççĕ. Ашшĕ-амăшĕ ачисене мĕн пĕчĕкренех çыхăну хатĕрĕ туянса парать. Кун пек вĕсене хăйсене лăпкăрах: кирек хăш вăхăтра та шăнкăравласа çыхăнма пултараççĕ. Манăн шухăшпа, аслă классенче вĕренекенсене шкулта телефон кирлĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем урокра справка материалĕсемпе усă кураççĕ. Вăтам тата кĕçĕн классенче вĕренекенсене вăл кирлех мар. Урок вăхăтĕнче чăрмантарать кăна.

10-11-мĕш классенче вĕренекенсем интернетра хăйсене кирлĕ материал тупма пултараççĕ. Калăпăр, географипе атлассемпе ĕçленĕ чухне: «Ачасем, справка материалне пăхса илĕрха», - тетĕп. Вĕсем ыйтнине хăвăрт пурнăçлаççĕ. Киле ĕç панă чухне те меллĕ: сăмахпа каласа çыртарса вăхăта ирттерместĕп, вĕсем кирлине ӳкерсе илеççĕ, соцсетьри «ушкăна» вырнаçтараççĕ.

Диана Смирнова, 11-мĕш класс вĕренекенĕ: Пурнăç пĕр вырăнта тăмасть. Технологисем аталаннă ĕмĕрте, манăн шухăшпа, çĕнĕ техникăна ăса хывмаллах. Телефонпа та усă курмалла. Шкула телефонпа кайнишĕн нимех те пулмасть. Урок вăхăтĕнче эпир ăна сӳнтеретпĕр. Кирлĕ чухне кăна çутатпăр. Телефонсăр алăсăр пекех туйăнать. Пĕлӳшĕн çунакан ачана телефон пурри кансĕрлемест, пулăшать кăна. Вĕренменнине шкула телефонсăр янин те, чаплă гаджетпа çӳретнин те усси çук. Ку йăлтах ачаран хăйĕнчен килет.

Л.П. Дубова, директор çумĕ: Ачасене урок вăхăтĕнче телефон кирлĕ мар, мĕншĕн тесен вĕсем унпа выляса кăна лараççĕ. Вĕренекенсен аллинче телефон пулсан урок иртттерме питĕ йывăр. Ача интернета кĕрсен учитель мĕн калани́не итлемест. Хальхи вăхăтра ачасем питĕ маттур, темĕн те пĕлеççĕ. Вĕренекенсене паян шкула телефонсăр килме чармашкăн май çук. Мĕншĕн тесен ашшĕ-амăшĕн ачи ăçтине, мĕнлине пĕлес пулать. Пĕтĕмлетсе калас тăк, телефон урок вăхăтĕнче кирлĕ мар, шкула телефонпа çӳреме чармалла мар.

Н.П. Яковлев, 2-мĕш класра вĕренекен ачан аслашшĕ: Паянхи ачасем пĕр-пĕринпе телефон урлă çыхăну тытаççĕ. Тен, çавăнпа шкул ачисен калаçу чĕлхи начар аталанать. Ачасем килте чухне те урама уçăлма тухасшăн мар, ролик те, коньки те, йĕлтĕр те интереслентермест вĕсене. Телефон, компьютер кăна пултăр. Вăхăта вĕсемпе ытларах иртттереççĕ. Çакă мана пăшăрхантарать те. Пĕрре сывлăхĕ хавшать, тепре çынпа хутшăнма пĕлмеççĕ. Çавăнпа, манăн шухăшпа, ачасене уроксем тата тăхтав вăхăтĕнче телефон кирлех мар. Телефона вĕсене уроксем вĕçленсен тин памалла.

Шкулсенче гаджетсемпе усă курма чармаллах-ши? Ку ыйтăва кам татса парĕ?

Кĕçĕн класри нумай ачана ашшĕ-амăшĕ шкула пырса илет. Шкултан тухсан ачан ашшĕ-амăшĕпе çыхăнмаллах. Технологисем аталаннă вăхăтра ачасене карас телефонĕ чиксе çӳреме чараймăн.




*Интернет уçлăхĕпе усă курса материала И.В.Власовăпа А.Г. Петрова хатĕрленĕ*

## Тигр çулĕн гороскопĕ

Тигр ырă чунлă - вăл тулаш енчен çеç хăрушă, чăннипе вара унăн çепĕç те ачаш характер, чун-чĕрипе питех те кăмăллă, юратнă çыннисемшĕн паттăрла ĕç тума та хатĕр. Унăн шанăçне кĕрес тесе çитес çула тивĕçлĕн кĕтсе илме тăрăшăр.

Хĕвелтухăç гороскопĕ тăрăх, Çĕнĕ çул январĕн 1-мĕшĕнче мар, 2022 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнче пуçланать. Тигр явапллă та тирпейлĕ çынсене юратать.

Уява тигр формиллĕ пĕчĕк теттесем, картинăсем тата ӳкерчĕклĕ салфеткăсем парнелеме юрать. Çĕнĕ çул умĕнхи парăмсенчен тата йывăрлăхсенчен хăтăлма тăрăшăр. Укса укса патнеллех туртăнать теççĕ, -пуянлăха йышăнăр. Кĕсьесемпе енчĕксем пуш-пушах пулмалла мар, пĕрер купюра та пулин вырнаçтарăр. Ачасем çинчен ан манăр-вĕсене те укса памалла. Çĕнĕ çула укса-тенкĕпе кĕтсе илсен, çулталăкĕпех укçаллă пулатăр.

Тигр тасалăха, йĕркене хисеплет, çавăнпа та сурт-йĕре пĕтĕмпех тасатмалла.

Тигршăн пурнăçра чи кирли вăл-чăтăмлă та çирĕп пулма вĕренесси. Ĕçри хастарлăхра хăйĕн тĕллевне пурнăçланă чухне виçеллĕ пулни.

Тигр çулĕнче çуралнă çынсем яланах ертсе пыракан позицине йышăнаççĕ. Мĕн пĕчĕкренех хăйсем тĕллĕн ĕçлеме тытăнаççĕ. Вĕсем хăйсемшĕн те, юлташĕсемшĕн те ответ тытма пĕлеççĕ. Çак çынсем çав тери хастар, вĕсем пуçланă ĕçе вĕçне çитереççĕ. Çынсене ертсе пыма, вĕсене хăйĕн энергийĕпе тыткăнлама пĕлет.

Ирĕклĕх. Тигрсен энергетики вăйлă. Вĕсем парăнмаççĕ, аллисене усмаççĕ. Пурнăçри йывăрлăхсене вĕсем чăтăмлăн тӳссе иртттереççĕ. Вĕсем хăйсен йăнăшĕсене тӳрлетме пĕлеççĕ. Ăнăçсăрлăх унăн кăмăлне пиçĕхтерет тата малалла кĕрешме вăй хушать. Тигрсем хăйсен ăсĕ - тăнĕпе, пурнăç принципĕсемпе усă курма юратаççĕ.

Никама пăхăнманлăх тата ирĕклĕх.Тигрçынсем ют правилăсене пăхăнма юратмаççĕ. Вĕсен хăйсен шухăшĕ, пурнăç позицийĕ, йышăнăвĕсем. Вĕсем яланах хăйсене кирлĕ пек тăваççĕ. Ют çынсенчен канаш ыйтмаççĕ.

Çирĕп тĕллевлĕ. Тигр хăй умне тĕллев лартсан, вăл ăна пурнăçлатех.Тигр усă та ырă кăмăллă, тус пулма пĕлет. Тигрсем вăхăтра пулăшма, кирлĕ канаш пама, пулăшма тата хĕрхенме пултараççĕ.

Ĕçченлĕх. Тигрсем пуçĕпех юратнă ĕçе путаççĕ. Пултарулăх профессийĕсенче, çар сферинче, инженер ĕçĕнче хăйсене тупсан килĕшӳллĕ. Характерне пула çирĕп карьера тума сайра-хутра çеç пултарать.

Уйрăмлăх. Вĕсем никамран та тĕслĕх илмеççĕ, ăс-тăнĕ те, шухăшлавĕ те çивĕч. Тигрсен пурнăçĕ хастар, вĕсем ăна хаяррăн хӳтĕлеççĕ, кирек мĕнле ыйту пирки те хăйсен шухăшне палăртаççĕ.

# Шкул пурнăçĕнчен. Хыпарсем

Пирĕн шкулта информатика вĕрентекенĕ В.М.Гаврилов - пĕтĕм Раççейри олимпиадăн регионти тапхăрĕн çĕнтерÿçи. Пĕтĕм Раççейри олимпиада çĕршывăн 43 регионĕнче кусăмлă форматпа иртнĕ. Ăна алгоритмла меслет, критикăллă шухăшлав, проектлас технологисемпе тухăçлă усă курас тĕллевпе иртересçĕ. В. М Гаврилова саламлатпăр тата ĕçре пысăк çитĕнÿсем тăвасса шанатпăр.



ИЗО вĕрентекенĕ Т.Я.Самылкина - «Педагогсен творчество тĕнчи» хула конкурсĕн призерĕ. Вĕрентекен кашни çулах çак конкурса хутшăнать. Хăйĕн ĕçĕсемпе вĕренекенсен пултарулăхне вăйлатать. Тамара Яковлевнăна конкурсра тивĕçлĕ вырăн йышăннăшăн саламлатпăр.



Хулара «Шупашкар – ĕçри паттăрлăх хули» муниципалитет конкурсĕ иртнĕ. Конкурс тĕллевĕ - вĕрентекен профессийĕн чысне çĕклесси, малта пыракан педагогика опытне тупса палăртасси пулнă.Çĕнтерÿçĕсемпе призерсем хушшинче пуçламăш класс вĕрентекенне А.В. Филиппована тата истори вĕрентекенне Н.С Кандакована саламлатпăр.

7-мĕш класра вĕренекен Александрова Евгенийăна тата унăн вĕрентекенне Г.А Афанасьевăна тăван ен культурипе олимпиадăра çĕнтернĕшĕн чун-чĕререн саламлатпăр.

Пĕтĕм раççейри шкул ачисен олимпиадин тата чăваш чĕлхипе литературин муниципалитет тапхăрĕн çĕнтерÿçисемпе призерĕсене саламлатпăр:

**7 класс çĕнтерÿçисем:**

*1. Иванова Эмилия*
*2. Романова Юлия*
*3.Макаров Роман*
*4.Дронов Ариф*
*5.Яковлева Дарья*
*6.Краснов Максим*
*7.Всильева Эвелина*
*8.Гаврилов Анастасия*

**8 класс çĕнтерÿçисем:**

*1. Кузьмина Яна*
*2. Орлова Виктория*
*3. Захаров Влад*
*4. Данилов Николай*

**9 класс çĕнтерÿçи:**

*1.Чернова Анастасия*

**10 класс çĕнтерÿçисем:**

*1. Чернова Юлия*
*2. Козлова Яна*

**11 класс çĕнтерÿçисем:**

*1. Смирнова Диана*
*2. Абдулхаирова Алина*

Олимпиадăна хатĕрлекенĕсем: И.В.Власова, А.Г. Петрова, О.В. Головина

Ответственный редактор: И.В. Власова
Верстка тата дизайн: И.В. Власова, А.Г. Петрова
Редакци адресĕ: 428000, Шупашкар, Кăкшăм урамĕ, 23 çурт, 47-мĕш шкул, 102 каб.